Раççей Федерацийӗн Вӗрентӳ тата ăслăлăх министерстви
Вӗрентӳ ӗçӗн федераллă агентстви
Аслă професси пӗлӗвӗ паракан патшалăх
вӗрентӳ учрежденийӗ
«И. Я. Яковлев ячӗллӗ Чăваш патшалăх
педагогика университечӗ»

САНТĂР АКСАР – ÇЫРАВÇĂ-ĂСЧАХ

70 ÇУЛ ТУЛТАРНĂ ТӖЛЕ

Биобиблиографи справочникӗ

Шупашкар
2008

ББК 83.3(2Рос.Чув)6-8
А 417

Сандор Аксар (А. И. Мефодьев) – писатель, ученый : к 70-летию со дня рождения : биобиблиографический справочник / сост. А. С. Мефодьева, Н. Н. Осипов. – Чебоксары : Чуваш. гос. пед. ун-т, 2008. – 78 с.

Печатается по решению ученого совета ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И. Я. Яковлева».

Сборник посвящен 70-летию чувашского писателя, ученого и педагога А. И. Мефодьева (Сандора Аксара). Содержит материалы о его жизненном пути, творческой и научно-педагогической деятельности, библиографию его научных публикаций, стихи-посвящения о нем и рецензии на его труды.

Для широкого круга читателей.

© Мефодьева А. С., Осипов Н. Н., составление, 2008

© ГОУ ВПО «Чувашский государственный педагогический университет им. И. Я. Яковлева», 2008

ЧĂВАШ ЁÇЁШЁН ТĂРĂШРĂМ
(Автобиографи вырăнне)

Паспăрт çинче эпё – Мефодьев Александр Иванович. Ялта – Хватей Микули Вани Санькки теççё. Хам çыракан хайлавсем айне вара Сантăр Аксар тесе алă пусатăп. Анне каланă тăрăх, эпё 1938 çулхи кёркунне Октябрь уявё умёнхи каçхине Юхма таврашёнчи Еншикре çуралнă. Ял канашён çуртне вара каярах кайса çав кун тёнчене килнё пек туса çыртарнă. Вăл – 1938 çулхи чӳкён 28-мёшё.

ЙĂХ-НЕСЁЛЁМ
Мăн асатте

Нумаях пулмасть-ха хамăн йăх-несёл тымарне туса хатёрлерём. Ăна асаттен ашшё таран пёлме май килчё. Мăн асаттеме Хватей тесе чённё. Аттепе пёр тăван Укаç аппа каланă тăрăх, вăл ялта ятлă-сумлă çын шутланнă. Хастарлăхёпе палăрса тăнă: кётӳ кётнё, выльăх ёрчетнё, тырпул çитёнтернё. Пёчёккён çапла мулне хăпартса пынă, хуралтăсем тăва-тăва лартнă. Ял çине вăл ылтăн та тупнă текен сăмах та юлнă. Пуйса çитсен «Еншикре пёр Хватей!» тесе кăкăрне шаккатчё, тет.

Асатте

Хватейён 7 ачинчен пёри Микула ятлă пулнă. Вăл – манăн асатте. Сăнарё халё те куç умёнчех. И. Я. Яковлевăнни пек вăрăм сухаллăччё. Çулла килте тёртсе çёленё вăрăм кёпепе, кăвак пир йёмпе, çăпатапа çӳретчё. Пилёкне çинçе çăм пиçиххи çыхатчё. Шёлепке тăхăнатчё. Иртен пуçласа мён каçчен картишёнче, кил-çурт таврашёнче кăштăртататчё. Колхозра бригадир ыйтнине тивёçтерсе ут таврашёсем майлатчё, киввисене юсатчё, кёреплесем, йывăç кёреçесем туса паратчё, урапасемпе çунасем, кăрмансем тӳрлететчё. Пире те, виçё

мăнукне, килти ĕçсене тума явăçтаратчĕ. Хытă тытатчĕ, çирĕп ыйтатчĕ. Енчен те хăй хушнине пурнăçламасан, итлемесен чĕн пушшипе кутран-çурăмран сӳсе илме те хирĕç марччĕ. Пахчара тăрмашма юрататчĕ. Çуркунне пĕрле хăмла пуссинче шалçасем лартаттăмăр, кĕр çитсен хĕвел ăшшинче пучахĕсене тататтăмăр. Асатте хурт-хăмăрпа та аппаланатчĕ. Килте эпир нихçан та пылтан татăк тăман. Ăна пысăк йывăç каткара тытаттăмăр. Асаттен хăнасем пуçтарăнсан кашнинех пысăк кашăкпа пыл хыптарса тухас ырă йăла пурччĕ. Килте апатланнă чух асатте малта хыçлă пукан çинче уйрăммăн ларатчĕ. Ыттисем эпир ăна хирĕç вăрăм саксем çине вырнаçаттăмăр. Анне – сулахай енче, атте – сылтăмра. Çăкăра асатте (тепĕр чухне – атте) малтан çĕçĕпе хĕрес хывса илетчĕ, вара чĕлĕсем касса кашнине валеçсе паратчĕ. Какая та çавнашкалах вакласа уйăрса тухатчĕç. Апата пурте пĕр пысăк чашăкран йывăç кашăксемпе çиеттĕмĕр. Апат çинĕ вăхăтра тирпейлĕ те сахал сăмахлă пулнă, палкани-шапăлтатнине, кулни-шӳтленине асатте кăмăлламастчĕ.

Хушăран, çанталăк тăнăç тăнă чух вăл патакне илетчĕ те хамăр ялти Укаçпа Кулюç хĕрĕсем патне, Макçăм ывăлĕн килне тата ытти тăван-пĕтен патне çаврăнса килетчĕ. Лешсем вара ăна аванах хăналаса яратчĕç. Анчах вăл нихçан та ураран ӳкмен, çынлăхне çухатман. Çĕр выртма юлман. Хăй тĕллĕнех тăн-тăн утса килетчĕ. Киле кĕнĕ чух «Тавсси, кил-çуртăм» тесе саламлатчĕ.

Асаттене ялта та, таврара та хытă хисеплетчĕç. Çапла, 20-мĕш çулсенче Еншикре вăйлă пушар алхаснă. Ун чух çур ял ытла çунса кайнă. Анчах асатте çурчĕ патне çитсен вут-кăвар малалла каяйман. Çынсем пысăк йышпа (вĕсем хушшинче Пикшикрен килнĕ тутарсем те нумайăн пулнă) кар тăрса унăн хуралчĕсене çунса кĕлленесрен сыхласа хăварнă.

Асатте çынсемпе каласма, сӳтсе явма юрататчĕ. Хĕллехи вăрăм каçсенче ун патне хамăр касри Путап тете, асаннепе пĕр тăван Маççа кукка, ытти ватă çынсем халаплама килсе ларатчĕç. Хăйсем Чĕмпĕре тырă сутма çӳрени, унта курни-илтни, И. Я. Яковлевпа

тĕл пулни çинчен вăрахчен каласу тăсатчĕç.

Асаттен сывлăхĕ аванччĕ. Вăл чирлесе выртнине астумастăп. Юлашки çулсенче çеç, ватлăхра ăш-чикĕ хытнине пула, ăна тула тухма йывăртарахчĕ. Эпир вара, мăнукĕсем, ăна хамăр пĕлнĕ пек пӳртрех пукан çине лартса çăмăлланма пулăшаттăмăр. Асатте 1958 çулхи авăнăн 30-мĕшĕнче 104 çула çитсе вилчĕ. Эпĕ, нимĕç çĕрĕнче çарта тăраканскер, çак хыпара илтсен хытă хурлантăм. Асаннене астумастăп. Вăл эпĕ пĕчĕккĕ чухнех çĕре кĕнĕ.

Атте

Асаттепе асанне 8 ывăлпа 4 хĕр çуратса ӳстернĕ. Чи кĕçĕнни – Ваня. Вăл манăн атте. Ăна 1945 çултанпа, вăл вăрçăран аманса килнĕренпе, астăватăп. Мăйран суранланнăччĕ, тимĕр пырпа çӳретчĕ. Кил-тĕрĕшре асаттепе пĕрле хуçалăх ĕçĕсене тăватчĕ. Ялта ятлă-сумлă çынччĕ. «Танк» колхозра ăна яланах правлени членне, ревкомисси членне суйлатчĕç. Чылай çул хушши сурăх фермине тата пахча çимĕç бригадине ертсе пычĕ. Ĕçри çитĕнӳсемшĕн тĕрлĕ наградăсене тивĕçрĕ.

Атте вулама юрататчĕ, çĕр-шыври тата тĕнчери лару-тăрупа кăсăкланатчĕ. Кашни çулах «Чăваш коммуни» тата районти «Коммунизм байрагы» хаçатсене çырăнса илетчĕ. Библиотекăпа çыхăну тытатчĕ. Астăватăп-ха, пĕррехинче, 1947 çулта, эпир иксĕмĕр унтан К. Ивановăн тин çеç пичетленсе тухнă «Нарспи» поэмине алла илтĕмĕр. Эпĕ, пĕрремĕш класс пĕтернĕскер, урама тухсан тӳрех кĕнекене уçкалама тытăнтăм. Хамăр çывăхри тăкăрлăкпа аннă май пирвайхи йĕркесене каçса кайсах вулама пуçларăм:

Пуш уйăхĕн вĕçĕнче
Хĕвел пăхрĕ ăшăтса.
Силпи чăваш ялĕнче
Юр ирĕлчĕ васкаса...

Куç умне темĕнле асамлă та илĕртӳллĕ тĕнче тухса тăчĕ.

Çак самантра эпĕ пуçласа тата яланлăхах илемлĕ поэзи тыткăнлăхне лекрĕм.

Атте хăйĕн виçĕ ывăлне хытă юрататчĕ. Вĕсене аннепе пĕрле ырă-сывă пăхса ўстерес тесе тăрăшатчĕ. Пĕррехинче çулла эпĕ ăш ыратнипе аптăрарăм. Атте пăшăрханса ўкрĕ. «Çарăк кăларса çитерем-ха сана, пулăшмĕ-и», – терĕ, çуса тасатса пачĕ. Кăштах вăхăт иртсен каллех ман вырăн патне пычĕ: «Мĕнле, ыратма чарăнмарĕ-и?» – тесе кăсăкланчĕ. Эпĕ хама лайăхах туймастăмччĕ-ха. Çапах та хамшăн кулянакан аттене хĕрхенсе кайрăм. Вара суйсах çапла хуравласа хутăм: «Чарăнчĕ». Ман чирĕм вара пĕрер кунран темле майпа хăех иртрĕ. Тепрехинче манăн тата çакăн пек инкек курма тивнĕччĕ. Эпĕ картишĕнче хўме çумне лартнă ураллă хăйрана авринчен тытса çавăра-çавăра выляттăмччĕ. Сасартăк хăйра хирĕнчĕклĕ пулса тўнсе кайрĕ те мана хупласа хучĕ, аврин шĕвĕр вĕçĕ сылтăм уран пакăлчакне шăтарса кĕчĕ. Палкаса юн юхма пуçларĕ. Кăшкăрнине илтсе таçтан атте чупса пычĕ. Мана хăйра айĕнчен кăларса урари юн юхакан шăтăка ал лаппипе хупларĕ. Кўршĕри Исевет аппасем патĕнче пурăнакан медсестрана Еля аппана васкавлă чĕнтерсе килтерчĕ. Урана тирпейлесе çыхса ячĕç. Кайран анне мана куллен тенĕ пек кўме çине лартса виçĕ çухрăмра ларакан пульницана сиплеме туртса çўрерĕ. Атте хăй ачисем енĕпе тимлĕ пулчĕ-ха. Эпир хамăр вара ăна упрама пĕлеймерĕмĕр пулмалла. Пĕррехинче хура кĕркунне, колхозăн çимĕç пахчине хураллама кайсан, вăл сивĕре хўшĕре çĕр каçса хытă шăнчĕ, тарăн чире кайрĕ. Тухтăрсем хушнине пурне те турăмăр темелле, анчах çăлса хăвараймарăмăр. 1968 çулхи кăрлачăн 9-мĕшĕнче вăл ĕмĕрлĕхех куçне хупрĕ. Атте ун чухне утмăл иккĕре çеçчĕ. Унтанпа хĕрĕх çул ытла иртрĕ ĕнтĕ.

Анне

Анне енĕпе йăх-несĕл тымарĕ Сăкăта куçать. Ман кукаçи – Купăс Микĕхверĕ. Вăл ялти пултаруллă та ăслă-тăнлă, пуян хресченсенчен пĕри пулнă. Кукаçи иккĕ авланнă. Малтанхи

арăмĕ – Карапай Шăмăршăсем. Унпа икĕ ача çуратнă. Иккĕмĕш арăмне Укçине тесе чĕннĕ. Унпа пилĕк ачана кун çути кăтартнă. Чи кĕçĕнни – Марье. Вăл манăн анне. Паçук аппа каланă тăрăх, аттепе анне паллашасси çапла пулса иртнĕ. Анне çуллахи пĕр кун Еншикре çемйипе пурăнакан Укçине аппăшĕ патне хăнана каять. Унта чух хăйпе пĕр тăванĕн çитĕнсе çитнĕ хĕрĕпе Паçукпа Пикшик пасарне тухать. Вĕсем хыççăн икĕ хĕрарăм (вĕсем аттен Укаçпа Кулюç аппăшĕсем пулнă) сăнаса çÿреççĕ, аннене атте валли суйласа илме тĕв тăваççĕ, кайран вăрттăн Паçукран тата ытларах ыйтса пĕлеççĕ. Лешĕ пытармасть, тĕрĕссине калать: «Вăл манăн аппа, Сăкăтран, пуян эртелтен» тет. Каçкÿлĕм аннепе Паçука кÿршисем шÿрпе çиме тесе хăнана чĕнсе каçаççĕ. Унта атте те пырать. Çапла вара аттепе анне палашаççĕ, çемье çавăрас пирки калçаса татăлаççĕ. Анне Сăкăта таврăнать. Çитес вырсарникун вăл хăйĕн амăшне систермесĕрех Юхма пасарне тухса вĕçтерет. Унтан аннене Треньелне тăванĕсем патне илсе каяççĕ. Кайран çак яла атте енчисем пырса çитеççĕ, çураçса туй тăваççĕ. Аннен ашшĕпе амăшне, ытти çывăх тăванĕсене еншиксем туя ирттернĕ хыççăн çеç хăнана чĕнеççĕ. Çавăн пек пуçланса каять аттепе аннен мăшăрлă пурнăçĕ.

Шăпа аннене пыл та çу хыптарсах кайман. 30-мĕш çулсенче çĕр-шыв пуçлăхĕсем пуçланă пăтăрмахсене пула пуянсен ретĕнче шутланнă асатте çуртсăр-йĕрсĕр тăрса юлать. Çавна май çамрăк мăшăр çĕрпÿртре асапланса пурăнать. Часах аттене Инçет Хĕвелтухăçне «тыл çарне» ăсатаççĕ. Аттепе аннен малтанхи тăватă ачи (икĕ ывăлпа икĕ хĕр) хĕнре-тертре пурăннăран тата кирлĕ пек медицина пулăшăвĕ илменрен пĕчĕклех вилсе выртаççĕ. Вĕсенчен пĕри çеç – Анна – 12 çула çитиччен пурăнать (çÿлти патшалăхра пултăрах çак хĕрачан – манăн аппан – чунĕ: вăл икĕ çул тавра хăйĕн пĕчĕкçĕ черчен аллисемпе мана, тин кăна шăтса тухнă пепкене, кипкесемпе чĕркесе йăтса çÿренĕ, сăпкара сиктернĕ, юрласа йăпатнă!).

Çапла вара, аттепе аннен малалли виçĕ ывăлĕ чĕрĕ юлать:

асли – Санькка (вăл эпĕ), ун хыççăнхисем – Илюкпа Хĕветĕр. Анне халĕ, малтанхи 4 ачине çухатса виçесĕр хуçăлса юлнăскер, пире чĕрĕ те сывă ўстерес тесе пĕтĕм вăйне хурать. Йывăрлăхĕсем те тупăнсах тăраççĕ: аттене вăрça илсе каяççĕ. Сăкăтри Нянук аппăшĕн тăлăха юлнă 3 ачинчен чи кĕçĕннине Петяна хăй килне усрава илмелле пулса тухать. Пилĕк арçынна пăхса пурăнма тивет хĕрарăмăн: апатне те хатĕрлемелле, кĕпи-йĕмне те çумалла, пўрт-çуртне те тирпейлемелле, пахчара та ĕçлемелле, выльăхне те пăхмалла, колхоза та çўремелле. Çапах та мĕнле йывăр пулсан та нăйкăшса ларман анне. Ăна тăвансем хытă юрататчĕç. Тулăхах пурăнаймасан та вăл вĕсене яланах лайăх пăхма, хаваслă пулма тăрăшатчĕ. Питĕ хитре юрлатчĕ. Анчах юррисем темшĕн тунсăхлă та салхуллăччĕ. Каçхине ĕçрен таврăнсан ĕне суса ларнă чух юрланă пусăрăнчăк кĕвĕллĕ юррисем чуна хускатса ыраттарса илтĕнетчĕç. Юрă ăстиех пулнă çав аннем. Ахальтен мар Сăкăтра вĕсен йăхне купăссем тенĕ.

Халĕ шутлатăп та, сăвă-юрă туртăмĕ мана аннеренех куçнă пулĕ тетĕп. Шел пулин те, нумаях ырă курса пурăнаймарĕ çав хаклă çыннăмăр. Çемьеллĕ пулнă хыççăнхи асаплă пурнăç, тĕрлĕрен йывăр ĕç туни, уйрăмах хĕллехи хаяр сивĕсенче пăрлă шывра çара алăпа пилĕк арçын валли кĕпе-йĕм чўхени уншăн сиенсĕр иртмен. Малтан пуç ыратнипе, кайран алă-ура чĕтренипе аптăра пуçларĕ, вунă çул хушши вырăнпах выртрĕ. 1977 çулхи çĕртмен 18-мĕшĕнче эпир ăна юлашки çула ăсатрăмăр. Унтанпа акă 31 çул хыçала юлчĕ ĕнтĕ.

Илюк шăллăм

Вăл – виçĕ пĕр тăванран ман хыççăнхи, вăталăххи. Пĕчĕклех чĕрĕ те йăрăччĕ, вăр-вар та çаврăнăçуллăччĕ. Ялти шкулта вĕреннĕ вăхăтрах колхоз витине лашасем пăхма çўретчĕ. Эпĕ ун пирки сăвă та çырнăччĕ. 12 çулта чухнех вăл, 6 класа çўрекенскер, çуллахи вăхăтра 100 ытла ĕç кунĕ турĕ. Колхоз

ĕçченĕсен пĕрлехи пухăвĕнче ăна уншăн хаклă парне парса чысланăччĕ. Çитĕнсе çитсен Совет Çарĕнче пулчĕ. Казахстана кайса ял хуçалăх механизаци шкулне пĕтерчĕ. Кайран тăван «Герой» колхоза таврăнчĕ, трактористра ĕçлерĕ. Çĕр ĕçне лайăх ăнланнăран, çынсемпе пĕр чĕлхе тупма, вĕсене тĕрĕс çул кăтартма пултарнăран ăна ял халăхĕ комплекслă юригадăна ертсе пыма шанчĕ. Бригада, вăл пуçарулăх кăтарнипе, кĕске хушăрах çĕр ĕç культурине татăклăн ӳстерчĕ. Унта ял хуçалăх техникипе усă курасси тĕпрен лайăхланчĕ. Ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунăшăн юратнă шăллăм Ĕç мухтавĕн III степеньлĕ орденне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Ăна IX пилĕкçуллăх ударникĕ ятне пачĕç. Çав çулсенче «Герой» колхоз районта çеç мар, пĕтĕм республикипе малта пыракан хуçалăх шутланнинче унăн тӳпи те пур. Анчах питĕ ир, хĕрĕх ултă çултах пурнăçран уйрăлса кайрĕ. Тăватă ывăлĕпе пĕр хĕрĕ ӳссе çын пулчĕç ĕнтĕ. Асли, Володик, И. Я. Яковлев ячĕллĕ педагогика университечĕн илемлĕ графика факультетне пĕтерчĕ, тĕрлĕ шкулсенче ачасене вĕрентрĕ, ял тăрăхĕн ĕçтăвкомĕнче вăй хучĕ. Марина медицина техникумĕн дипломне алла илчĕ. Киров облаçĕнчи Яранск районĕнчи Пушкино ялĕнче фельдшерпа акушер пунктне чылай çул хушши ăнăçлă ертсе пычĕ. Халĕ тăван районта çак енĕпе ĕçлет. Сашапа Ванюш тата Куля та паянхи пурнăçра хăйсен вырăнĕсене тупрĕç. Пурте çемьеллĕ, маттур ачасем çитĕнтереççĕ.

Хĕветĕр шăллăм

Виçĕ пĕр тăванран чи кĕçĕнни. Вăл 1945 çулта çуралнă. Патăрьелĕнчи вăтам шкул хыççăн Çĕрпӳри ял хуçалăх техникумĕнче пĕлӳ пухрĕ, механик дипломне алла илчĕ. Патăрьелĕнчи «Сельхозтехника» пĕрлешĕвĕнче, ытти предприятисенче механикра, инженерта, аслă инженерта ĕçлерĕ. Пур çĕрте те хăйне лайăх енчен çеç кăтартса пачĕ, чылай Хисеп грамотипе диплома, премие тивĕçрĕ. Çамрăк чухне вăл спортпа та туслăччĕ. Велосипедпа чупса ялти çамрăксем

хушшинче республика чемпионĕ ятне çĕнсе илчĕ. Хĕветĕр хăйĕн мăшăрĕпе Галяпа виçĕ хĕр пăхса çитĕнтерчĕ. Виççĕшĕ те вĕсем медицинăра вăй хураççĕ. Ларисăпа Валентина – врачсем, Ангелина – фельдшерица. Шăлăмпа кинĕн икĕ маттур мăнук пур: Дарукпа Верук.

Кусем, çӳлерех асăннă аслă ăру çыннисем тата хампа пĕр варта выртнă шăллăмсем – йăх-несĕлĕм йывăççин уйрăлми пайĕ, тĕп никĕсĕ, тĕп çăлкуçĕ, сăваплă юн çаврăнăшĕ.

Кун-çулăн пĕтĕм сыпăкĕ, кашни татăкĕ маншăн хăйне евĕр аталану шкулĕ, туптанупа пиçĕхӳ сунталĕ пулса юлчĕ. Вăхăт шунăçемĕн, çулсем иртнĕçемĕн тăн-пуç уçăлса, тавракурăм сарăлса, вăй-хал хушăнса, чун-чĕре пуянланса пычĕ.

АЧАЛĂХĂМ

Вăл çав çулсенчи мĕнпур чăваш ачисеннипе – «вăрçă ачисеннипе» – пĕр евĕрлех темелле. Тăшманпа çапăçнă тапхăрта пĕтĕм çĕр-шыв пекех, чăваш тăрăхĕ те йывăрлăхра пулнă. Вăйпитти арçынсем, çав шутра манăн атте те, фронтра çапăçнă. Ял пурнăçĕ хĕрарăмсемпе ватă-вĕтĕсем çинче тытăнса тăнă. Анчах ача, самани тем пек хĕн пулсан та, ачах пулса юлать çав. Эпĕ те шкула кайичченхи çулсенче чи пĕчĕккисен тĕнчинчех çаврăннă. Кил хушшинче, урамра, ял таврашĕнче, Пăла хĕрринче вăхăта хам пĕлнĕ пек ирттернĕ. Пирĕн ачалăхра резина мечĕксем çукчĕ. Вĕсене хамăрах çăмран йăваласа тăваттăмăр. Теттесемпе пуканесене те лапкара туянма май килмен. Йывăçран, хупран, пушăтран, улăмран, тăмран, çĕтĕк-çурăкран ĕне-лаша, тискер кайăк кĕлеткисем хатĕрлеттĕмĕр тата ытти япаласем майлаштараттăмăр. Йăмра турачĕсенчен, хăмăшран, пултăран-кашлич кĕпçинчен, кăвак тăмран шăхличсем тăваттăмăр. Кашнийĕн хăйĕн вăййиччĕ. Хĕрачасем выльăх шăммисенчен тунă шакăсене сиктерсе ларма килĕштеретчĕç. Е тата, çеремсĕртерех типĕ вырăнсене тăваткалсене пайласа чĕрсе

тухатчĕç те кĕленче ванчăкĕсене ывăта-ывăта сике-сике вылятчĕç. Эпир вара, арçын ачасем, ытларах чышкăлла çапма кăмăллаттăмăр. Вăрçăлла та выляттăмăр. Йывăçран меллештернĕ пăшал пеккисене тытса пĕр-пĕрне хăвалаттăмăр. Атте-анне уя кайсан кил-тĕрĕшре вăй çитнĕ таран тăрмашаттăмăр. Ака-суха тата ĕç çи тапхăрĕсенче ялта вăхăтлăха ясли уçатчĕç. Эпир хамăр чашăк-тирĕке йăтса унта апата çӳреттĕмĕр. Яшки-пăтти унта темшĕн килтинчен те тутлăрах пекчĕ. Яслие çӳрени пире темĕнле хаваслăх кӳретчĕ, уяв евĕр туйăнатчĕ. Пысăкланарахпа питĕ шкула каяс киле пуçларĕ. Çапла 1945 çулхи вĕренӳ çулĕн пуçламăшĕнче хам тĕллĕнех пĕрремĕшсен класне кĕрсе лартăм. Анчах та вĕрентекенĕ мана «эсĕ çиччĕ тултарайман-ха, çитес çул килĕн» тесе ăсатса ячĕ. Кулянса тухса кайрăм. Ку вăл пурнăçăмри пĕрремĕш хурлăхлă самант пулчĕ-тĕр. Тепĕр çулхине вара чăнласах пĕрремĕш класс ачи ятне илтĕм. Анне мана ятарласа шурă пиртен сумкка çĕлесе пачĕ. Килте тĕртсе çĕленĕ кĕпепе шăлавар тăхăнса, çĕнĕ çăпата сырса пирвайхи хут класа çĕкленӳллĕн пырса кĕни халĕ те куç умĕнчех. Пире ватă вĕрентӳçĕ Анисия Иппатьевна Маслова ăшшăн кĕтсе илчĕ, вырнаçтарса лартрĕ. Вăл тимленипе эпĕ часах вулама-çырма, шутлама вĕрентĕм. Шкул маншăн иккĕмĕш тăван кил пулса тăчĕ. Унта пирĕн валли тăтăшах пĕчĕк уявсем йĕркелетчĕç. Уйрăмах Çĕнĕ çул савăнăçлă иртетчĕ. Класс варрине пысăк чăрăш вырнаçтарса лартатчĕç. Ăна хамăрах хутран касса тунă пĕветнĕ теттесемпе илемлететтĕмĕр. Ун тавра çаврăннă май купăс кĕввипе юрлаттăмăр, ташлаттăмăр, сăвăсем калаттăмăр, Хĕл Мучирен кучченеçсем илсе хĕпĕртеттĕмĕр.

Анне çуллахи кунсенче хăй аттепе колхоза ĕçлеме кайсан мана, кĕçĕн классенче вĕренекенскерне, апат хатĕрлеме хушса хăваратчĕ. Пахчана тухса улма кăларса кĕмеллеччĕ, ăна урама пӳрт умне лартнă валашкара çумаллаччĕ, хуппине тасатса е яшка, е улма çакса ямаллаччĕ. Анне хушнине чиперех пурнăçлаттăм-ха. Анчах урампа иртекен учительсенчен, уйрăмах

Пăла хĕрринчи касра пурăнакан Мария Ипполитовнăран хытă вăтанаттăм. Аякран килнине асăрхасан вара чылай чухне картишне кĕрсе тăраттăм. Иртсе каймасăр та тухмастăм.

Хам пысăкланнăçемĕн, аслăрах классене куçса пынă май килти ĕçсем те нумайланса тата кăткăсланса пычĕç. Халĕ манăн калча çумлама, çурлапа тырă вырма, пучах пухма, кĕлте турттарма, авăн çапма, тымар çимĕç кăларма, вăрман касма кайма тиветчĕ.

Эпĕр çамрăк чух ялта хĕрачана ытларах вăл ал ĕç ăсти пулнине, тĕрлеме-çĕлеме, пир-авăр хатĕрлеме пултарнине кура хаклатчĕç. Арçын ачашăн вара вăл çăпата тума пĕлни, платник туртăмĕ пурри, лашапа ĕçлеме юратни пĕлтерĕшлĕччĕ. Эпĕ те çаксене асра тытнă. Çăпата тума вĕренес тесе нумай тăрăшрăм. Тăххăра кайсан асатте пулăшнипе пĕрремĕш çăпата турăм. Ку вăл пурнăçăмри мана пирвайхи савăнăç кӳнĕ пысăк çĕнтерӳ пулчĕ. Иккĕмĕш хут каярахпа асатте парса янă пилĕк мăшăр çăпатана Юхма пасарĕнче сутса укçа илсе килнĕ хыççăн хытă хĕпĕртенĕччĕ. Ачалăхри виççĕмĕш çитĕнӳ тесе пуçласа хам тĕллĕн колхоз хирне лаша кӳлсе кĕлте турттарма кайнине шутлатăп.

Эпĕ çамрăк чух ялта тĕрлĕ уявсем вăйлă иртетчĕç: çĕнĕ çул, мăнкун, çăварни, вăйă, хĕр сăри т. ыт. те. Сурхуринче эпĕ те тантăшсемпе пĕрле килĕрен киле кĕрсе, шӳтле-камитле хăтланса, мыскарасем кăтартса çӳренĕ. Çăварнире капăрлатнă лашасемпе катаччи чупса савăннă. Мăнкунра таканккипе сикнĕ, камичепе ярăннă. Çамрăксен вăййисем тата мĕн тери хӳхĕм те селĕмччĕ. Классика опери пĕр хĕрринче тăтăр!

Ачалăхра, паллах, пурте хĕвел пек çиçсе, ялтăраса тăман. Пăшăрханмалли самантсем те тупăнсах тăнă. Çапла çуллахи пĕр кунхине килтисем мана хамăр касри ĕнесене пуçтарса кĕтӳ черетне кайма хушрĕç. Çывăхра выльăхсене çитермелли вырăнсем çукран виçĕ-тăватă çухрăм инçете, Йĕпреçелле каякан аслă çул леш енне, Хăрвар таврашне çитиех çӳçреме тиветчĕ.

Унта варлă-лапамлă çĕрте курăк çителĕклехчĕ. Кунтах тахçан алтнă хăвăлсăр пысăк пусă пурччĕ. Ĕнесене çавăн таврашĕнче кĕтнĕ вăхăтра чутах инкек пулса иртетчĕ. Сасартăк Элекçей тетесен ĕни мăйракинчен çыхнă пăявĕ ури айне пулса çакланнăран пусă еннелле кутăн чакса пыма пуçларĕ. Чупса пытăм. Пушăпа çапатăп малалла уттăр тесе. Вăл çаплах каялла чакать. Темле май кун пек юраманнине тавçăрса илтĕм. Хăвăрт пĕшкĕнтĕм те урине тăлланинчен ĕçерсе ятăм. Ĕне тӳрех чарăнчĕ, малалла утса кайрĕ. Тепĕр икĕ утăм чаксанах ĕне пусса кутăн чăмма пултаратчĕ. Кайран, киле таврăнсан, çавăн пирки хăраса-шутласа темĕнччен çывăраймасăр выртрăм. Ара, мĕн тери пысăк хуйхă пулатчĕ енчен те ĕне вилнĕ пулсассăн. Ун чухне çак выльăх хресченшĕн çур пурнăç шутланнă. Инкек кӳрекенĕ эпĕ пулаттăм, хакне пирĕн çемьен тӳлеме тиветчĕ.

Ачалăхра пурнăçшăн хăрушă самантсем те пулман мар. Пĕррехинче, çулла Çирĕклĕ Пăлана юхса кĕнĕ тарăн вырăнта шыва кĕнĕ чух путасран аран çăлăнса юлтăм. Ун чух мана Тимахви пиччесен Элексей тети, тин кăна çартан таврăннă паттăр салтак, инкекрен хăтарчĕ. Чунĕ çӳлти патшалăхра пултăрах çак маншăн турă пек хаклă çыннăн!

Еншикри 7 çул вĕренмелли шкулта 1946–1953 çулсенче пĕлӳ пухрăм. Кунта пултаруллă та ырă кăмăллă çынсем ĕçлетчĕç. Шкул ертӳçисене П. А. Сидоровпа (каярахпа вăл Чăваш университечĕн ректорĕ таран çĕкленчĕ) П. Н. Ильина, Л. Я. Яковлев, Е. С. Сидорова, Н. В. Степанов вĕрентӳçĕсене ăшшăн аса илетĕп. Вĕсем пире çирĕп те тарăн пĕлӳ панипе пĕрлех чăн-чăн çынсем пулса çитĕнме пулăшас тесе мĕнпур вăя хуратчĕç. Шкулта тĕрлĕ кружоксем ĕçлетчĕç. Эпĕ хор тата литература кружокĕсене çырăннăччĕ. Манăн сăввăмсем класри тата шкулти стена хаçачĕсенче, алăпа çырса кăларакан «Пирĕн хĕвеллĕ çамрăклăх» журналта тăтăшах тухатчĕç. Общество ĕçне хутшăнасси хамăрăн 5-мĕш класри «Сталинец» стена хаçатне илемлетсе кăларма тытăннинчен пуçланчĕ. Каярахпа шкулти

пионер дружинин членне суйларĕç. 1953 çулта вĕренсе тухнă ятпа ирттернĕ уявра тăван шкула тав туса хамăн сăвва вуласа пани асра тăрса юлчĕ.

ЯШЛĂХĂМ

Шăнкăртам шкулĕнче

Тăван ялти шкула пĕтернĕ хыççăнах Патăрьелĕнчи вăтам шкула кайса кĕтĕм. Пĕр предметсăр пуçне пуринпе те аванах ĕлкĕрсе пыраттăмччĕ-ха. Алгебрăпа кăна ăнса пĕтмерĕ. Р. В. Борисова вĕрентӳçĕ мана малтанхи уйăх çурă хушшинче умлă-хыçлă ултă хутчен «1» паллă лартса пачĕ. Хам та айвантарах пулнă пулĕ çав ку дисциплинăпа (тăван шкултан вĕренсе тухнă чух аттестат çинче «4» паллă тăнă пулин те). Хытă кулянма пуçларăм, малалла мĕн тумалла-ши тесе пăшăрханаттăм. Юлашкинчен тутар ялĕнчи Шăнкăртамри вăтам шкула куçма шухăшларăм. Малтанхи кунтан пуçласах унта манăн математикăпа лару-тăру майлашăнса пыма тытăнчĕ. Ку предмета Султан Алимович Якушев вĕрентетчĕ. Темăна яланах ансат чĕлхепе тĕплĕн ăнлантаратчĕ. Çынлăхĕ те питĕ пысăкчĕ унăн. Пурнăçра пайтах хура-шур курнă, Тăван çĕр-шывăн аслă вăрçи витĕр паттăррăн утса тухнă, чылай орден-медале тивĕçнĕ çак ыр кăмăллă тутар çынни ман асăмра яланлăхах юлчĕ.

Шăнкăртам пирĕн ялтан 3 çухрăмра ларать. Унта кайма эпир, Еншик ачисем, ирхине çиччĕ çурăра, хамăртан самай аякра ларакан Аслă Арапуçĕнчи крахмал савăчĕн сасси Пăла тăрăх янраса çитсен, хускалаттăмăр. Ялтан тухсан пĕр ушкăна чăмăртанаттăмăр: Куляпа Гена Муштаковсем, Тихăн Хвостов, Куля Митрофанов, Рита Маслова... Пирĕн çумма Пикшикрен килекен тутар ачисем пĕрлешетчĕç: Равиль Чинкин, Ринат Закиров, Хатип Каштанов... Икĕ халăхăн çамрăк ăрăвĕ эпир туслă пулнă, килĕштерсе вĕреннĕ, пĕр-пĕрне пулăшса пынă.

Вăрçă хыççăнхи вунăçуллăх пыратчĕ. Никама та ун чух çăмăл пулман. Тĕрлĕ йышши налуксем нумайччĕ. Пирĕн тата,

ашшӗ пуррисен, шкулта вӗреннӗшӗн çулталăкне 150 тенкӗ тӳлемеллеччӗ. Укçине тупма вара ялти çынна питӗ кансӗрччӗ. Эпир, ачисем, каникулсенче атте-аннене мӗнле те пулсан укçа тупма пулăшасчӗ тесе тăрăшаттăмăр. Пӗр çулхине эпӗ Кирере ӗçлесе пурăнакан Куля тетепе ермешсе Сăр вăрманӗ варринче ларакан çак поселока çитрӗм. Тăванăм мана чугун çул çинче юсаса çӳрекен бригадăна вырнаçтарчӗ. Çирӗпленсе çитмен шăм-шакăмпа пăчă-шăрăхра, çунтаракан хӗвел айӗнче сулмаклă инструментсемпе ӗçлеме, пӗçерсе тăракан вăрăм та йывăр рельсăсемпе тăрмашма пӗрре те çăмăл марччӗ. Уйăх ӗçленӗ хыççăн ӗç укçи пачӗç. Чăкăртатса тăракан вун тенкӗлӗх темиçе хут укçана тытсан ун чух калама çук хӗпӗртенӗччӗ. Епле хӗпӗртес мар-ха: эпӗ ăна хам тӗллӗн, хам тарпа-юнпа ӗçлесе илтӗм-çке, ку манăн малтанхи ӗç укçи-çке, атте-аннен те кăмăлӗ уçăлӗ... Анчах савăнни иртерех пулчӗ. Касса патӗнчен пăрăнсанах ман умма Куля тете сиксе тухрӗ. Вăл мана укçа илессине пӗлсе сыхласа тăнă-мӗн. Ӗçме юратаканскер, нимӗн именмесӗр манран çур ӗç укçине илсе хăйӗн кӗсйине персе чикрӗ... Ытти çулсенче те эпӗ укçа тăвас тесе тăрăшман мар: Улатăр районӗнчи вăрман варринче ларакан Çам поселокне кайса курăс-мунчала сӳсе пурăнтăм; Тикешри хула вырăнне ăслăлăх экспедицийӗ археологи тӗпчевӗсем тума килсен çӗр чакаласа çӳрерӗм...

Вăтам шкулта вӗреннӗ вăхăтра пултарулăх ӗçне те пӗр самантлăха та пăрахман. Районти «Авангард» хаçатăн 1954 çулхи утă уйăхӗн 23-мӗшӗнчи номерӗнче манăн «Агитаторсене курма çук» ятлă пӗрремӗш заметка çапăнса тухрӗ. «Ворошилов ячӗпе хисепленсе тăракан колхозра агитацилле-массăлла ӗç ямăхса кайнă. Хальхи вăхăтра агитаторсене хирте курма çук. Агитколлектив руководителӗ В. Гаврилов юлташ агитаторсен ӗçне пачах та тӗрӗслемест, агитацилле-массăлла ӗçе ертсе пымасть», – тесе çырнă унта. Тепӗр уйăхран çурлан 1-мӗшӗнчи номерти «Крокодил кӗтессинче» «Кахал» ятлă малтанхи сăвва пичетлесе кăларчӗç:

Сар хĕвел хăпарчĕ
Янкăр тӳпене, –
Ăйăхран вăранчĕ
Марине инке.
Çынсем тыр выраççĕ
Пăчă-шăрăхра.
Маруç васкамасăр
Канать сулхăнра.
Марине инкеçĕм,
Сана сĕнӳ пур:
Эс пĕр ӳркенмесĕр
Хире тухса кур.

Пĕтĕмпе «Авангард» хаçатра 1954 çулта 8 материал, 1955 çулта – 18 (вĕсенчен 8-шĕ сăвă), 1956 çулта – 31 материал (вĕсенчен 10-шĕ сăвă) кун çути курчĕ. Çавăн пекех кӳршĕри Первомайски районĕнчи «Коммунар» хаçатра 1955 çулта – 4, 1956 çулта – 1 сăвă, Куйбышев облаçĕнчи Чаллăпуç районĕнчи «Ленин çулĕ» хаçатра 1955 çулта 2 сăвă пичетленчĕ. 1956 çулхи юпан 21-мĕшĕнче «Çамрăк коммунист» хаçатра «Аттестат илсен» сăвă тухрĕ. Ку вăл – республика пичетĕнче çапăннă пирвайхи сăвă.

10-мĕш класра вĕреннĕ чух мана шкулти «За отличную учебу» ятлă тĕп стена хаçачĕн редакторĕ туса хучĕç. Çав çулах ĕçялкорсен республикăри 2-мĕш съездне делегат пулса хутшăнма тӳр килчĕ. Пуш уйăхĕнче пулчĕ ку. Вăл саманара пирĕн таврара шоссе çулĕсем çукчĕ, автобуссем чупмастчĕç. Канаша çити тракторпа çуна çине ларса кайрăмăр. Çанталăк питĕ сивĕччĕ. Эпĕ хытă шăнтăм. Çапах та пуçласа Шупашкара курни, чаплă пуху ĕçне хутшăнни мана вышкайсăр пысăк çĕкленў кӳчĕ.

Вăтам шкулта вĕреннĕ вăхăт тата тепĕр паллă пулăмпа шăпамра тарăн йĕр хăварчĕ. Эпĕ хăрушă чире парăнмасăр малалла ăнтăлакан кăвар чĕреллĕ сăвăçпа Альпăрт Канашпа

çыхăну тытма пуçларăм. 1955 çулхи чӳк уйăхĕнче унтан пĕрремĕш çыру илтĕм. Хавхаланса, çунатланса кайрĕ çамрăк чунăм. Çакăнтан тытăнса эпир унпа вăл мĕн çĕре кĕричченех çырусем çӳретрĕмĕр.

Аттестат илнĕ хыççăн

Вăтам шкул пĕтерсен пĕр хушă тăван колхозра ахаль ĕçре вăй хутăм. Ял-йышпа пĕрле «утă çултăм, вутă çуртăм». Колхоз правленийĕнче учетчик пулса шут шăрçисене те вылятса пăхрăм. Пĕр уйăх хушши «Авангард» редакцийĕнче отпуска тухнă çын вырăнне тăлмач ĕçне туса пытăм. Кĕркунне мана ял библиотекин ертӳçине лартрĕç. Çав вăхăтрах колхозри комсомол организацийĕн секретарьне те суйларĕç. Маттурччĕ пирĕн çамрăксем, пухусемпе уявсене, концертсемпе спектакльсене, ытти тĕрлĕ ĕçсене хастар хутшăнатчĕç. Таврара эпĕр хамăр пултарулăха кăтартман ял юлман. Ытларах хĕлле лашасем кӳлсе тухса çӳреттĕмĕр. Библиотекăра пухăнса ушкăнпа радио итлеттĕмĕр, çĕнĕ кĕнекесене вуласа сӳтсе яваттăмăр. Сатира хаçачĕ кăларса тăраттăмăр. Краснов Петя сĕннипе ăна «Лассо» тесе ят панăччĕ.

Салтакра

1957 çулта юпа уйăхĕн варринче мана çара кайма хут тыттарчĕç. Лере çитсен хама салтака мĕнле ăсатни çинчен сăвă çырнăччĕ:

Эп хурлăх юрри юрламарăм,
Çĕклем тутăрсем сулламарăм
Повестка илсен, салтака кайнă чух.
Салху йăларан пăч ман ютшăнчĕ чун...

Ку йĕркесем, паллах, çав саманари идеологи витĕмĕпе, кивĕ йăласене пăрахса çĕннисем çине куçмалла тенине итленĕ май çуралчĕç. Чăннипе вара эпĕ салтака каясси пĕрре те çак сăвăри пек пулса иртмерĕ. Лашасем çине ларсах тантăшсемпе урамсем тăрăх юрласа, тутăрсем сулласах çӳрерĕм. Тутăрĕсене, тĕрлĕ те

илемлĕ тĕслисене, хама хисеплекен ял хĕрĕсем панăччĕ. Çирĕм те ытлаччĕ. Чи хӳхĕммисене хамăрăн аяккарахри тăвансен хĕрĕсем – Лидяпа Валя Масловăсем парнеленĕччĕ. Çавăн чух тус-юлташсемпе ялти йышлă хурăнташсем, çывăх çынсем патне кĕрсе сывпуллашса тухрăмăр. Юлашки кун киле пĕтĕм тăван-пĕтен пуçтарăнчĕ, чипер кайса килме ырă сунчĕ. Тухас умĕн тантăшсен варрине тăрса атте-анне умне чĕркуçленсе лартăм, вĕсенчен сăваплă пил илтĕм. Халăх ял вĕçне тухса сумлăн ăсатса ячĕ.

Çарта 1957 çулхи юпан 18-мĕшĕччен пуçласа 1960 çулхи юпан 2-мĕшĕччен пултăм. Малтан пĕр уйăх ытларах Ровно облаçĕнчи Сарны хулинче тăтăмăр. Унтан Германие илсе кайрĕç. Раштав пуçламăшĕнче вырăна çитрĕмĕр. Эпĕ 1-мĕш гварди танк çарĕн госпитальне лекрĕм. Вăл Дрезден çывăхĕнчи Шморкау текен ялта вырнаçнăччĕ. Пирĕн чаç пысăках марччĕ. Килте чухне культура çынни пулнине асăрханă хыççăн кунта та мана çав ĕçсенех шанса пачĕç: библиотекăпа клуб тата почта. Тивĕçĕме йĕркеллех пурнăçласа пынă. Çарпа политика вĕренĕвĕн отличникĕ пулнă. Малтанхи çул ахаль салтаксем пекех постра хуралта тăраттăмччĕ. Каярахпа, ефрейтор званине панă хыççăн, караул службин ертӳçи пулма яра пуçларĕç. Манăн «Виççĕмĕш разряд» тата 2-мĕш степеньлĕ «Отличник ГТО» спорт значокĕсем пурччĕ. Виçĕ çулĕнче те чаçри комсомол бюровĕн членĕнче тăтăм. Илемлĕ пултарулăх ĕçне хутшăнаттăм. Çарпа политика вĕренĕвĕнчи çитĕнӳсемшĕн 22 поощрение тивĕçнĕччĕ. Совет Çарĕсен Германири ушкăнĕн «Советская Армия» хаçачĕпе тачă çыхăну тытаттăм. Сăвăсем çырма чарăнман. Тăван район хаçачĕ вĕсене пичетлесех тăчĕ. Çуралнă çĕр-шывран аякра тăрсан та, отпуска кайса çӳреме май килмесен те эпĕ кичемлĕхе туйсах кайман. Салтаксемпе офицерсен йышĕ питĕ туслăччĕ. Юнашарах тата икĕ чăваш каччи пурри те пысăк çăмăллăхчĕ. Пĕри – Йĕпреç районĕнчи Тури Кĕлешкассинче çуралса ӳснĕ Павлов Коляччĕ, тепри – Муркаш тăрăхĕнчи Кашмаш ачи Мозеркин

Викторччĕ. Пĕр-пĕринпе куллен тăван чĕлхепе каласса йăпанаттăмăр. Германире чух пĕр салтак урлă Самар облаçĕнчи чăваш хĕрĕпе паллашрăм. Унпа виçĕ çул хушши çырусем çÿретрĕмĕр. Унран ман пата ăшă сиплĕ варкăш килсе тăчĕ.

50-60-мĕш çулсен чиккинче вăтам пĕлÿллĕ салтаксене аслă шкула кĕме экзамен тытма хĕсмет вĕçлениччен кăшт маларах ярас йĕрке пурччĕ. Эпĕ те пединститутăн чăваш уйрăмне лекес тĕллевпе Шупашкара документсем хатĕрлесе ăсатнăччĕ. Йыхравĕ те килчĕ. Анчах ăнса пĕтеймерĕ. Тепĕр эрнерен тухса каяс тенĕ вăхăтра çÿлтен тĕнчери лару-тăру кăткăсланнине пула «ямалла мар» тесе приказ килчĕ. Ку хыпар кăмăла хытах хуçса хăварчĕ.

Салтак пулнă тапхăрта эпĕ тăван киле пĕр самантлăха та манман. Аттепе аннене сăмахпа та, ĕçпе те пултарнă таран пулăшас тесе тăрăшнă. Хам клубра ĕçленине кура манăн пăртак укçа тума майсем пурччĕ. Сĕтел çиттисем, кавирсем, тăхăнмаллисем тата ытти хамăр патра çукрах япаласем туянса киле ярса параттăм. Çавăн пек 4-5 посылка ăсатма пултартăм. Килтисем вĕсене сутса тунă укçапа пÿрт лартнă чух пĕренесем илме усă курнă. Çурта юсаса çĕнетме аякран хамăн пĕчĕк тÿпене хывма пултарнишĕн питĕ хĕпĕртенĕччĕ.

Йĕпреçре

Салтакран таврăнсан, пĕр-ик уйăх килте пурăннă хыççăн, 1961 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнче Йĕпреç районĕнчи «Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн» хаçатра ĕçлеме пикентĕм. Малтан литература сотрудникĕ пултăм, кайран – çырусен пайĕн ертÿçи. Редакторта паллă журналист И. Я. Тенюшев ĕçлетчĕ. Вăл мана лайăх йышăнчĕ. Вĕрентсе, пулăшса, хавхалантарса тăчĕ. Редакцирен кайсан та Иван Яковлевич мана куçран вĕçертмерĕ, пултарулăхпа ăслăлăхра пĕрмаях çулăма уçса пычĕ. Паянхи кунченех эпĕ унăн ăшшине, тимлĕхне туйса тăратăп. Журналистикăпа наукăра ăна хамăн пĕрремĕш вĕрентÿçĕ вырăнне

хуратăп, унăн умĕнче пуçăма таятăп. Редакцире пĕрле ĕçленĕ А. Ф. Смирнова, В. И. Андреев-Хурамала, К. Д. Александрова, Р. С. Яковлевăна тата ытти юлташсене те ăшшăн аса илетĕп. Типографи ĕçченĕсен Наçукпа Верукăн, Праскипе Манян, Нинапа Аннан, Васян сăнарĕсем те яланах куç умĕнче.

Хаçат тавра сăвă-калав çыракансен туслă ушкăнĕ чăмăртаннăччĕ. Уйрăмах Гаврил Луçпа Николай Андреев тухăçлă ĕçлетчĕç. Кунта ман сăввăмсем те пичетленсех тăчĕç. Пĕчĕккĕн хаçатăн пур жанрĕсене алла илсе пытăм. Пысăкрах калăплă япаласем – очерксем, тĕленчĕксем, репортажсем, интервьюсем, фельетонсем – çырма пуçларăм. «Эйпеç хĕрĕ Наçтук» ятлă сăвăлла очерк çырса конкурса тăратрăм. Кунтах наука туртăмĕллĕ пĕрремĕш утăма турăм. Вăл «Тăван чĕлхемĕрĕн илемлĕхĕпе туллин усă курар» ятлă статья пулчĕ. Унта эпĕ хаçат редакцине килнĕ сăвăсене тишкерсе тухнăччĕ.

1962 çулхи ака уйăхĕнче мана КПСС Йĕпреç райкомĕн оргпай инструкторне лартрĕç. Хама çирĕплетсе панă Ильич тата Киров ячĕллĕ, «Березовка», «Новая сила» колхозсене тăтăшах тухса çÿрерĕм, пухусемпе канашлусене хутшăнаттăм, коммунистсемпе тата ытти ял ĕçченĕсемпе тĕл пулаттăм, вăй çитнĕ таран пулăшма тăрăшаттăм. Кунта авăн уйăхĕччен ĕçлерĕм.

Çак районта чухне эпĕ кĕретсĕр майпа И. Я. Яковлев ячĕллĕ педагогика институтĕнчи чăваш уйрăмне вĕренме кĕтĕм. Кунта ирттернĕ тапхăрта хам валли çĕнĕ туссем, юлташсем чылай тупрăм.

«Авангард» редакцийĕнче

Малаллахи кун-çулăм каллех тăван Патăрьелпе, «Авангард» хаçат редакцийĕпе çыхăнчĕ. Унта 1962-1970 çулсенче литсотрудникран пуçласа пур вырăнта та тенĕ пекех хам вăя виçсе пăхрăм: ял хуçалăх пайĕнче те, парти пурнăç пайĕнче – редактор çумĕнче те. Тĕп хуçамăр сывалма кайсассăн темиçе

уйăх унăн ĕçĕсене пурнăçласа пыма тиветчĕ. Ку тапхăр пирки нумаях чарăнса тăрам мар. Ун çинчен «Тĕнче пуриншĕн те пĕрре» кĕнекемри «Утмăлмĕшсен çути» статьяра тĕплĕн çырса кăтартнăччĕ. «Авангардра» ирттернĕ 8 çул пурнăçăмри асран кайми вăхăт пулса юлчĕ. Çак хушăра республикăн кăнтăр енчи районĕсенчи пур ялсене те тенĕ пекех çитсе куртăм. Тĕрлĕ темăсемпе тата жанрсемпе çĕршер япала пичетлесе кăлартăм. Ăсталăха туптарăм. Тĕп ĕçпе пĕрлех илемлĕ пултарулăха та пăрахман. Хайлавăмсенчен чи лайăххисем Шупашкар хаçат-журналĕнче кун çути курчĕç. «Авангард» мана ăсталăхпа тĕпчев çулĕпе малалла кайма пулăшрĕ. 1965 çулта Альпăрт Канашăн «Иккĕмĕш утăм» кĕнекине хакласа «Кĕрешме чĕнекен сăвăсем» статья çыртăм. Каярахпа та вĕсем тухсах тăчĕç. 1973 çулхи нарăсăн 20-мĕшĕнчи номерте пичетленнĕ «Пултаруллă янташăмăрăн пĕр очеркĕ çинчен» ятлă наука статйи чи ăнăçлăраххи пулчĕ пек туйăнать. Унта Митта Ваçлейĕн «Мамăк утравĕ» хайлавне тишкернĕччĕ. Эпĕ хутшăннипе çав çулсенче Митта Ваçлейĕ ячĕллĕ литература пĕрлешĕвĕ ăнăçлă утăмсем турĕ, «Юхма» журнал кăларса тăраттăмăр. Çав çулсенче тĕп ĕç тулашĕнче ыттине те нумай тума тивнĕ. Хăш-пĕрисене кăна аса илем: редакципе типографири парторганизаци секретарĕ, халăх контролĕн райкомĕн членĕ, «Пĕлӳ» обществăн районти президиумĕн членĕ, чăваш çыравçисен Союзĕн районти илемлĕ литературăна сарас тĕлĕшпе ĕçлекен çынни. «Авангард» тапхăрĕ кун-çулăмра ытти пĕлтерĕшлĕ пулăмсемпе палăрса юлчĕ: пулас мăшăрăмпа Шурапа паллашрăм, çемье çавăртăм, икĕ ывăл ашшĕ пулса тăтăм, аслă шкул пĕтерни çинчен диплом илтĕм, журналистсен союзне кĕтĕм, «Ĕçри хастарлăхшăн. В. И. Ленин çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май» медале тивĕçрĕм.

ПАРТИ ТЫТĂМЁНЧЕ

Вăйпиттилĕх тапхăрĕ манăн 60-70-мĕш çулсен чиккинче пуçланчĕ пулĕ тетĕп. 1970 çулхи çĕртме уйăхĕнче КПСС Патăрьел райкомĕн организациллĕ пайĕн ертӳçи пулма çирĕплетрĕç. Унта икĕ çул ытларах иртрĕ. Партин районти комитечĕн тилхепине пултаруллă та талантлă коммунист В. С. Тимошев тытса пыратчĕ. Вăл хавхалантарса тăнипе пирĕн оргпай кирлĕ те усăллă ĕçсем чылай ирттерчĕ. И. Я. Кузнецовпа В. И. Драбчак инструкторсене ырăпа аса илетĕп. Вĕсем опытлă çынсемччĕ, пур енĕпе те пуçарулăхпа хастарлăх кăтартатчĕç.

1972 çулхи юпа уйăхĕнче КПСС обкомĕн тин çеç йĕркеленнĕ культура пайне инструктор пулса ĕçлеме илчĕç. Унта 1985 çулхи чӳкĕн 10-мĕшĕччен тимлерĕм. Пирĕн пая 9 çул хушши О. И. Талля ертсе пычĕ. Эпĕ çак çулсене хам пурнăçăн чи телейлĕ те асамлă тапхăрĕ вырăнне хуратăп. Пирĕншĕн, инструкторсемшĕн (малтан манпа пĕрле В. Г. Морушкин, кайран Г. Н. Горшков ĕçлерĕç), Ольга Ивановна чăн-чăн анне пек, аслă аппа пек туйăнатчĕ. Эпир, паллах, вăл хушнине пур чухне те туллин пурнăçлайман та пулĕ. Анчах вăл çакна нихăçан та палăртман. Сассине хăпартса каласнине те илтмен. Пур ыйтăва та лăпкăн сӳтсе яватчĕ, ăслă канашсем паратчĕ. Çав çулсенче республикăра литературăпа ӳнер енĕпе усăллă ĕçсем чылай пулчĕç. Чăваш культури çыравçăсен, композиторсен, художниксен, сцена ăстисен çĕнĕ те паха хайлавĕсемпе пуянланчĕ. Вĕсен сулăмлă ӳсĕмĕсенче манăн пĕчĕк тӳпем те пур мар-ши, тетĕп. Обком тапхăрĕнчи тепĕр паллă пулăма та палăртса хăварас килет. Кунта чухне «Рабочисем çинчен çырнă хальхи чăваш прози» темăпа диссертаци хатĕрлерĕм, 1984 çулта ăна Саранскра ăнăçлă хӳтĕлерĕм.

«ХАТЁР ПУЛ» ЖУРНАЛТА

1985 çулхи Октябрь уявĕ тĕлнелле шăпам мана чăваш ачисен «Хатĕр пул» журналĕн редакцине илсе çитерчĕ. Унта çичĕ çула икĕ уйăх ытларах ĕçлесе тултараймарăм. Канăçсăр та хĕрӳ шухăш-туйăмлăччĕ пирĕн пĕчĕк пултарулăх ушкăнĕ: Евгения Степанова, Анатолий Смолин, Василий Кошкин-Кервен, Нина Артемьева, Василий Самойлов, Леонид Павлов, Руфина Семенова. Журналта çĕнĕ ярăмсем чылай çуралчĕç: «Калав çыратпăр хамăрах», «Тавлашу пӳлĕмĕ», «Ырă сĕнӳсен арчи», «Чун ыратăвĕ», «Ырвалюк», «Сатур Сентти» т. ыт. те. 1986 çулхи 7-мĕш номере пĕтĕмпех тăнăçлăха халалланăччĕ, гонорарне мир фондне хывнăччĕ. Çавăнтах «Тăнăçлăх кĕввисем» ятпа «Хатĕр пулăн» пĕрремĕш пĕчĕк кĕнекине пичетлесе кăларнăччĕ. Казахсен «Пионер», çармăссен «Пионер юк» журналĕсемпе номерсемпе ылмашăнса илтĕмĕр. Сĕтелçи теннисĕ енĕпе журнал парнине илессишĕн çулсерен ăмăртусем ирттереттĕмĕр. «Хатĕр пулăн» Трубина Мархви ячĕллĕ литература премине туни те пархатарлă ĕç пулчĕ тесе шутлатăп. Кунта вăй хуни мана ачасене халалланă публицистикăна аталантарма хастарлăнрах хутшăнма май пачĕ. «Редактор сăмахĕ» ярăм уçса унта çитĕнекен ăрупа çĕр-шыв, патриотлăх, кăмăл-сипет, ырăпа илем, тасалăхпа чун-чĕре пуянлăхĕ çинчен каласрăм.

ПЕДАГОГИКА УНИВЕРСИТЕТĔНЧЕ

1992 çулта Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетне куçрăм. Студентсене чăваш литератури историне, ача-пăча литературине, халăх сăмахлăхне вĕрентме пуçларăм. 1998–2004 çулсенче çĕнĕрен уçăлнă чăваш филологи факультетне декан пулса ертсе пыма телей пӳрчĕ. Факультета уçма Г. С. Сидоров ректорпа филологи ăслăлăхĕсен докторĕ

М. Ф. Чернов профессор хастарлăн хутшăнчĕç, йĕркеленӳ тапхăрĕнче ăна пур енĕпе те пулăшса, хавхалантарса пычĕç. Георгий Сидорович сĕннипе литература кафедрине мухтавлă ăсчахăмăр М. Я. Сироткин ятне патăмăр. 2000 çулта факультетра «Чăваш чĕлхипе литератури тата ют çĕр-шыв чĕлхи», 2002 çулта «Чăваш чĕлхипе литератури тата вырăс чĕлхипе литератури», 2004 çулта «Чăваш чĕлхипе литератури тата юриспруденци» специальноçсем уçăлчĕç. Чăваш диалектологи лабораторийĕ йĕркеленчĕ. Аспирантура ăнăçлă ĕçлесе пычĕ. Республика тулашĕнчи чăваш ачисене вĕрентесси çине тимлĕ пăхрăмăр. Пушкăртстана кайса вырăнта экзамен йышăнса 19 çамрăка Шупашкара вĕренме илсе килни хамăн тăван халăх умĕнче тунă сăваплă ĕç пулчĕ пулĕ тесе шутлатăп. «Хунав» литература пĕрлешĕвне йĕркелесе ертсе пыма тӳр килнишĕн те савăнатăп. Çамрăк çыравçăсем 1998 çултанпа «Хунав» альманахăн 5 кĕнекине кăларчĕç. Ытти тĕрлĕ ырă ĕçсем те сахал мар пулчĕç. Паян факультет Е. А. Андреева ертсе пынипе хăйĕн пархатарлă йăли-йĕркине, традицийĕсене малалла хăюллăн тăсать, çирĕп утăмсем тăвать. Педагог-ăсчахсем алла-аллăн, килĕштерсе ĕçлеççĕ. Л. П. Сергеев, Н. П. Петров, П. Н. Метин профессорсем, А. Е. Горшков, В. П. Никитин-Станьял, К. И. Николаева, Е. А. Лебедева, Г. Ф. Брусова, В. И. Игнатьева, Т. В. Артемьева, А. Д. Ахвандерова, Т. В. Денисова, И. Г. Яковлева, В. В. Павлов доцентсем, филологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ Н. Н. Осипов, Н. И. Степановăпа О. В. Скворцова аслă вĕрентӳçĕсем – студентсен яланхи çывăх та кĕтнĕ тусĕсем.

Кун-çул тăршшĕнче тĕрлĕ çĕрте ĕçлесе пăхрăм. Культура ĕçченĕ те, хаçатçă та, парти тытăмĕн çынни те, çыравçă та, вĕрентӳçĕ те пултăм. Вĕсенчен пĕрне уйăрма, хăшĕ чи кирлĕреххине, хаклăраххине палăртма йывăр. Ку ĕçсем пурте пĕр-пĕринпе çыхăнура, хутшăнура тăраççĕ, пĕтĕмĕшле «культура» ăнлав картине кĕреççĕ. Çапах та çулăма уçса пыраканни

журналист ёçё пулчё пек туйăнать. Ыттисем пурте ун никёсё çинче çуралса чечекленчёç мар-ши тетёп.

Пурнăçра яланах пёр тёллевпе, пёр ёмётпе пурăнтăм. Хама çуратнă халăхăма мён чухлё те пулин ырă тăвас, унăн чёлхипе сăмахлăхне, йăли-йёркине малалла кайма май парас, мухтавлă çутавçăмăр И. Я. Яковлев пуçарнă «чăваш ёçне» çёнё пахалăхлă пусăма çёкленме пулăшас тесе тăрăшрăм.

Паян «Телейлё-и эсё?» тесе ыйтас пулсан çапла хуравлăттăм: «Телейлё!». Манăн вёренекенёмсем йышлă. Ытарайми вёрентекенёмсем те юнашарах: Е. С. Сидорова, С. Н. Ахмеев, И. Я. Тенюшев... Тус-юлташсем нумай: Ю. М. Артемьев, Н. А. Исмуков, Г. П. Васильев, В. А. Васильев, И. М. Ергунов, З. Л. Ильин... Сăмахпа ўнер ăстисем хушшинче те чуна çывăх ятсем сахал мар: Л. В. Таллеров, Г. В. Краснов, Б. Л. Борлен, Г. Н. Желтухин, А. С. Смолин çыравçăсем, Ю. Д. Кудаков, Н. Л. Эриванов, Ю. Н. Жуков, В. Ф. Романов, И. Р. Степанов, Н. И. Заводскова, В. И. Адюков, Е. И. Кузьмина-Тивлет композиторсем, Праски Витти, В. Л. Немцев, Н. А. Енилин художниксем т. ыт. те. Ылтăн пек тăванăмсем-хурăнташăмсем пур манăн. Пуринчен те пахи, пуринчен те хакли, паллах, кил-йыш: юратнă Шура мăшăрăм, виçё ывăлăм – Владикпа Атнер тата Вихтёр, кинёмсем – Валяпа Светлана та Оля, мăнукăмсем – Алюшпа Арчум тата Кётерукпа Наçтук. Чăннипех те ăраскаллă эпё.

Сантăр Аксар.

2008 çулхи юпан 21-мёшё.

А. И. МЕФОДЬЕВĂН ПИЧЕТЛЕННЕ ТĔПЧЕВ ĔÇĔСЕМ

1962

1. Тăван чĕлхемĕрĕн илемлĕхĕпе туллин усă курар (çамрăк авторсен сăввисене пăхса тухни) // Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн (Йĕпреç районĕн хаçачĕ). – 1962. – Мартăн 14-мĕшĕ.

1964

2. Асра юлакан сăнарсем (Патăрьелĕнчи халăх театрĕн ĕçĕ-хĕлĕ çинчен) // Авангард. – 1964. – Февралĕн 9-мĕшĕ.

1965

3. Горох выращиваем в пару (совместно с З. Сейфутдиновым) // Зернобобовые культуры. – 1965. – № 3. – С. 10–11.

4. Кĕрешме чĕнекен сăвăсем (Альпăрт Канашăн «Иккĕмĕш утăм» кĕнекине хаклани) // Авангард. – 1965. – Июлĕн 24-мĕшĕ.

1967

5. Асра юлакан сăнарсем (Патăрьелĕнчи халăх театрĕн спектаклĕсене хаклани) // Авангард. – 1967. – Октябрĕн 31-мĕшĕ.

1968

6. Вĕренмелле, ăсталăха ўстермелле (редакцие килнĕ сăвăсене пăхса тухни) // Авангард. – 1968. – Декабрĕн 21-мĕшĕ.

1969

7. Чапа тухнă хор (Сăкăт хорĕн ĕçĕ-хĕлне хаклани) // Авангард. – 1969. – Июлĕн 31-мĕшĕ.

1970

8. Аттесен çулĕпе (Вл. Чекушкинăн çав ятлă кĕнекине рецензилени) // Авангард. – 1970. – Февралĕн 21-мĕшĕ.

1973

9. Пултаруллӑ янташӑмӑрӑн пӗр очеркĕ çинчен (Митта Ваçлейĕн «Мамӑк утравĕ» очеркне тишкерни) // Авангард. – 1973. – Февралĕн 20-мĕшĕ.

1974

10. Трактор заводне тӑвакансене мухтаса // Тӑван Атӑл. – 1974. – 3№.

11. Вӑхӑт чĕнĕвĕ (литература ыйтӑвĕсем) // Коммунизм ялавĕ. – 1974. – Майăн 25-мĕшĕ.

12. Хавхалантаракан тема (Пĕтĕм Союзри ударлӑ стройка – Чăваш писателĕсен очеркĕсенче) // Коммунизм ялавĕ. – 1974. – Декабрĕн 4-мĕшĕ.

1975

13. Повесть о рабочих буднях (о повести Вл. Чебоксарова «Огонь и сталь») // Советская Чувашия. – 1975. – 16 ноября.

14. Паянхи тĕп тема (трактор завочĕ – литературăра) // Тракторострой çути. – Шупашкар, 1975. – 233–242 с.

1977

15. Особенности конфликта романа А. Талвира «Фундамент» // Труды НИИЯЛИЭ при Совете Министров ЧАССР. Вып. 77. – Чебоксары, 1977. – С. 25–36.

16. Первые о первых (образ рабочего в чувашской поэзии 30-х гг.) // Дружба (альманах). – Чебоксары, 1977. – № 28. – С. 78–86.

1978

17. Шаг к признанию (наш культурный фронт) // Советская Чувашия. – 1978. – 20 апреля.

18. Герои романа – рабочие (о романе Г. В. Краснова «Молодость не повторяется») // Советская Чувашия. – 1978. – 24 октября.

19. Неисчерпаемый источник (с общего собрания писателей республики) // Советская Чувашия. – 1978. – 31 декабря.

1979

20. Образ рабочего в чувашской малой прозе 30-х годов // Труды НИИЯЛИЭ при Совете Министров ЧАССР. Вып. 95. – Чебоксары, 1979. – С. 138–148.

21. Тытнă çултан пăрăнмасăр (А. Талвир пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен) // Авангард. – 1979. – Март уйăхĕ («Номертен номере» ярăмпа).

22. Тытнă çултан пăрăнмасăр (А. Талвир пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен) // Ялав. – 1979. – 3 №. – С. 19.

23. Деятели литературы и искусства – Тракторострою // Блокнот агитатора. – 1979. – №5. – С. 15–16.

1980

24. В русле нравственных исканий (анализ повести Л. Таллерова «Сăпка юрри») // Дружба. – 1980. – № 38. – С. 106–114.

